КС(ЧУВ)
С30
16 162-чув



ЮРИЙ
СЕМЕНОВ

# тупа

Национальная библиотека ЧР
4-016162

КС(Чув)
С30

ЮРИЙ СЕМЕНОВ

# Тупа

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 5312

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1972



С(ЧУВ)
С30

ПРОВЕРЕНО
20 ...

М16162-чув

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

7—6—3
80—72 М

# *Калаç, чĕрем*

## ИРСЕМ

Çап-çутă сывлăмлă ирсем,
Ялан çынна
Ыр сунакан,
Юна-чуна
Вăй хушакан
Таса ирсем,
Шупка ирсем,
Кам çуратать сире, ирсем!
Кам вăратать сире, ирсем!
Шăпчăк ыйхиллĕ шурăмпуç
Ир килессе ярать хыпар,
Хĕвел — ырми-канми кĕтӳç —
Чĕнет пире: «Тăрар, тăрар,
Икĕ алла пĕр ĕç тытар...»

Выртсан инçе çулсем-йĕрсем
Тĕл пултăм сирĕнпе, ирсем,
Эп хĕвеланăç чиккинче,

Берлин таврашĕнче,
Римра,
Крымра...
Анчах умра —
Кунçулăм ирĕнчи ирсем:
Хĕмне çухатнă çăлтăрсем,
Çав шурăмпуç, çав çутă сывлăм,
Анне сасси: «Каяр пуль, ывлăм,
Анамăр юлĕ халăхран,
Еçлер халь, канăпăр кайран...»

Ирсем...
Кам пурăнăç пиллет сире!
Ирсем...
Кам чĕрĕлĕх кӳрет сире!

Маншăн пулсан, эсир тухатăр
Тăр шывлă Шетмĕ хĕрринчен.
Каллех тĕнче тавра васкатăр
Тепре çĕн кун пуçланиччен.

1969.

## АСЛĂ ЮХĂМ

Çулла, хĕлле, чечеклĕ çуркунне
Е чалăш çумăрлă, тĕтреллĕ кĕркунне
Çут сывлăмлă ирпе,
Кунĕпе,

Çĕрĕпе
Васкаççĕ. Тулхăраççĕ пуйăссем,
Самолетсем сывлăш сийне сĕвеççĕ,
Касаççĕ хумсене пăрахутсем,
Машинăсем çухрăм çăмхи чĕркеççĕ...

Килеççĕ анăçран,
Килеççĕ тухăçран,
Кăнтăр енчен,
Çич тинĕс леш енчен.

Семафорсем хупă пулсан,
Светофорсем тытса чарсан,
Шлагбаумсем çула пӳлсен,
Кĕтсе ларас килмест вĕсен.

Çынсем Ильич патне васкаççĕ:
Кам Чĕмпĕре,
Кам Çĕпĕре,
Кам Хусана, Куйбышева,
Кам Смольнăя е Разлива
Часрах çитесшĕн хыпăнаççĕ.

Вĕсем унăн йĕрне тĕпчесшĕн,
Вĕсем унран канаш илесшĕн,
Ун пек ĕçчен, сăпай пуласшăн
Пур халăха тăван тăвасшăн.

Шăваççĕ черетсем.
Мавзолей,

Вуншар музей
Витĕр шăвассĕ черетсем.
Ильич пурне те йышăнать:
Пĕрне вăй-хал хушать, чĕртет,
Теприн питне те хĕретет.
Ильич пурне те йышăнать,
Вăл чĕрĕ, хăй ĕçне тăвать.

Тухассĕ пĕрисем,
Кĕрессĕ теприсем.
Шăвассĕ черетсем,
Шăвассĕ черетсем...

1970.

## ХĔРЛĔ ПЛОЩАДЬРЕ

Ильич выртмасть мавзолейра.
Вăл, кепкине тытса алра
Калать хĕрӳллĕ сăмахне,
Çул кăтартать ĕçхалăхне.
Ленин атте вĕрентнипе,
Вăл çĕнтерме пилленипе
Çынсем кунтан фронта ăсаннă,
Пуçа хурса,
Чыса сыхланă.

Кунта туян
Çĕршыв епле маттур сывланине,

Кунта туян
Ракетăсен вут-хĕмлĕ хăватне.
Кунта —
Гагаринăн çĕн уйăх пек кулли,
Кунта —
Кашнин телейĕ куç тулли.

Калаç, чĕрем,
Сан пур калас сăмаххусем,
Калаç, чĕрем,
Сан пур калас шухăшусем,

Калаç, сана итлеччĕр
Сăваплă стенасем,
Ем-ешĕл чăрăшсем,
Çак ĕмĕрхи чулсем сана итлеччĕр,
Тăван çĕршыв чĕри сана итлетĕр.
Ун евĕр çирĕп пул,
Унран нихçан ан юл!

...Тĕп площадьре —
Икĕ чĕре:
Пĕри —
Пиншер пин чĕререн
Тăран Хĕвел-чĕре,
Çĕршыв чĕри,
Тепри —
Ун çутă хĕмĕпе
Çунан этем чĕри.

Икĕ чĕре...
Хушшийĕ — çур халаç.
Итлет Аслă чĕре,
Калаç, чĕрем, калаç...

1970.

## КОМСОМОЛĂН III СЪЕЗЧĔН ДЕЛЕГАЧĔ

Ваттисем çапла калаçă:
«Çамрăк пек пул çамрăкпа».
Вăл, çакна асра усранăн,
Çăмăл, чĕрĕ шăмшакпа

Клуб сцени çине хăпарчĕ,
Кăшт çĕклерĕ аллине.
Зал кĕрлерĕ, зал шăпланчĕ,
Зал тинкерчĕ ун çине...

«Тĕтĕм-сĕрĕм явăнатчĕ
Тăвăл хыççăн таврара.
Чăваш çĕрĕн делегачĕ
Турĕç хучĕç пухура...

Мускава каять яш-кĕрĕм,
Пăравус, чуп юртăпа.
Юртаймасть çав: — Кăмрăк пĕтрĕ,
Анăр пăчкă-пуртăпа!

Вĕри юнлă, туслă халăх
Калаттармĕ тепĕр хут.
Вутă пур! Вĕçтер çеç халĕ,
Пăс çилхеллĕ тимĕр ут!

Съезд пырать. Пуплеççĕ вирлĕ.
Тĕрлĕ сăн делегатсен.
Шухăш çеç пĕрре: «Мĕн кирлĕ
Коммунизм тăвас тесен!»

Вĕренмешкĕн халалларĕ
Юратса Ильич пире.
Ун сăмахĕн вут-кăварĕ
Паян кун та чĕрере.

Сĕмлĕхе сасартăк сирчĕç
Çут хĕвел пек шухăшсем.
Ĕмĕрлĕх ун чух вăй илчĕç
Комсомолец-тантăшсем...»

...Ильич хăй те килнĕ тейĕн
Çамрăксен тĕлпулăвне.
Манăçа кайса итлетĕн
Ветеран асилĕвне.

1970.

## ХУРĂНЛĂХ

Миçе хут кунтан иртсе çӳренĕ,
Эс сăнанă хурăнсен ретне.
Ачаран çав илемпе киленнĕ,
Пурпĕр вăл тивет чун хĕлĕхне.

Йăрăс йывăçсем шап-шур кĕпеллĕ,
Тытнă алран-ал пĕр-пĕрине...
Эс итлен уçланкăри капелла
Пикенсех юрра шăратнине.

1970.

## ПИАНИСТ

Ал çупрĕç пурте ун ятне илтсен.
Вăл çăмăллăн, васкавлăн тухрĕ.
Унăн асамлă, вăрăм пӳрнисем
Клавиатура тăрăх шурĕç.

Мĕнле калать, сăпайлă хăй, чипер —
Анчах та сăнакан пулмарĕ.
Илемлĕх тĕнчине пытаннăскер,
Пире текех вăл курăнмарĕ.

Зал сарăлчĕ. Çӳлте — тӳпе,
Хĕвел — ун ĕмĕрхи вучахĕ,

Кĕвĕ юхать. Умри ĕмĕтупе
Çитетĕн тӳпене анчах-и!

Вĕрет ăш çил, çеçке çурать пахча,
Уйра-хирте — пучах кашлавĕ...
Пуçа кĕрет ырри, ырри анчах,
Этемлĕх ĕçĕ-шухăшлавĕ.

Сап-сар çурта пек хыр вăрманĕнче
Хавас тĕлпулăва туятăн:
Ĕлккен ӳкерчĕксен тыткăнĕнче
Чайковские эс тав тăватăн.

1970.

## ШЫРАВ

Эс çын илтменнине илтесшĕн,
Курасшăн çын курманнине,
Эс çын пĕлменнине пĕлесшĕн
Туясшăн çын туйманнине.

Çуркуннепе савса сăнатăн
Чечен чечек çурăлнине,
Ешĕл садра çĕнĕ соната
Ирпе ирех çуралнине.

Çулла эс çырлана каятăн,
Лекетĕн çумăр таш шине,

Сив тумлампа пěрле туятăн
Тăван кěтесěн ăшшине.

Кěрнек кěр тумě — кěмěл кěрěк,
Кěр чапě — тулăх кěреке,
Эс тепěр хут утатăн ирěк
Хирти хастарлăх йěрěпе.

Хěллен хěлěх али те саншăн —
Илемлě тупмалли юмах,
Эс пурнăçа сăвва хывасшăн —
Шыратăн тивěçлě сăмах.

1969.

## Т Е Л Е Й

Телей патне çитме инçе-мěн,
Ăна тупмашкăн çăмăл мар.
Хăш чух пěтет вăй утнăçемěн,
Анчах чěре хушать: «Утар».

Телей патне ěç-хěл, ăс-хакăл,
Юлташлăх урлă çул выртать.
Вăл паттăр çынсене пит хапăл,—
Хирěç тухать те ал тытать.

1958.

## ХУМСЕМ

Хумсем, хумсем,
Эсир — шух çилĕн тарçисем,
Вăл хушнипе,
Вăл чĕннипе
Енчен енне хутлакансем.

Хумсем,
Эсир — хыпарçă-ямшăксем,
Пĕр çыранран
Тепри таран
Салам илсе çӳрекенсем...

Хумсем,
Эсир — ачашлăх аллисем,
Амăш куллен хăй пепкине
Типтерлĕн чăпăл тунине
Асилтерсе, вылякансем...

Çук, çук, хумсем,
Хастар хумсем,
Эсир — асамлă Атăл ачисем,
Ун вăй-халне кăтартакан,
Ĕçченлĕхне палăртакан
Йăлттам та йăрă ачасем.

1969.

## ТИХА

Сакăлта та чанккама
Йăлтăркка, яка,
Юратать ачашланма
Уйăхри тиха.

Кунсерен ĕçе тухать
Амăшĕпеле,
Е кая тăрса юлать,
Е иртет каллех,—

Çăмăл пултăр кăшт тесе
Юнашар утать,
Амăшĕ çавна сиссе
Çăмăлрах туртать.

1959.

## ТАВĂРУ

(Ш ў т)

Сарă çўçлĕ йăмăкăм ĕсĕклет, йĕрет:
«Кўршĕсен ачи Куçук кўрентерчĕ», — тет.

Тавăрмашкăн ан васка, чиперскер, лăплан,
Ак ўссе çитетĕн те хухĕм хĕр пулан.

Çав Куçук куç хывĕ те, эс хуравлăн: «Çук».
Каччă йĕрĕ куççульпех хурланса ун чух.

1958.

## ЛИТЕЙЩИК

Тем çӳлĕш кăмака çăварĕнче
Выляççĕ хĕрлĕ çулăм чĕлхисем,
Кăвак шупка хĕмсен ялтравĕнче
Çӳрет литейщик — паллакан этем.

Кунта иккен вăл, хурçă шăрататать
Чăваш çĕршывĕн учĕсем валли.
Сив тимĕртен вĕри хăват тăвать
Çав лăпкă та сăпайлă çын алли.

Пĕлетĕп эпĕ унăн ашшĕне.
Хăш чух кӳрше, вĕсем патне, кайсан,
Лартатчĕ те пире, ачасене,
Пурнăç çинчен паратчĕ каласа.

Хĕлле çитсессĕн — çапнă вăл чăпта,
Çулла — тертленнĕ çын ани çинче.
Çĕр сывăрмасăр тунă çăпата,
Телей мĕнне савах туйман ĕçчен.

Ун ывăлĕ — çĕршывшăн пăлла ят,
Чи пирвайхи литейщик чăвашран.

Руда вӑйне вӑр-вар пӑхӑнтарать,
Ентешӗм хӑй — чи ҫирӗп рударан.

...Малашлӑха вӗҫетӗп шухӑшпа.
Курасчӗ ман литейщик ачине:
Кам пулӗ вӑл? Маршрутлӑ караппа
Тен, халӑха турттарӗ Марс ҫине?

1967.

## КӖРХИ ШУХӐШ

Улӑхра, варсенче ирӗн-каҫӑн
Илтейместӗн текех карӑша.
Пахчара кайӑксем юрламаҫҫӗ,—
Ваксасах ӑсанаҫҫӗ ӑшша.
Ҫулҫӑсем ҫӗр ҫине тӑкӑнаҫҫӗ,
Ҫил сапать вӗсене тӑтӑшах...

Пӗлӗтсем таҫталла тек шӑваҫҫӗ,
Час-часах сивӗ ҫумӑр лӳшкет.
Хӑшӗсем кӳренӳллӗн калаҫҫӗ:
«Кун пек чух ӗҫлес кӑмӑл пӗтет».
Савнӑ тусӑм, сана ман хальхаҫҫӑн
Ҫакӑн пек хуравлассӑм килет:

«Сан чунна хупласассӑн салхулӑх,
Уҫӑлма тух ем-ешӗл хире.

Мучисем те курман тыра-пула
Кĕр калчи парнелесшĕн пире.
Хăвах калăн:
— Кичемлĕх, ан çулăх,
Савăк юрă янраттăр чĕре!»

1964.

Сарă тутăр çыхрĕ те хĕвел
Сарă кун çывхарасса систерчĕ.
Çитеймест-мĕн тавлашма мехел —
Хĕл Мучи çурçĕрелле вĕçтерчĕ.

Çĕнĕ çурт çуначĕ айĕнче —
Куçкĕски пек çаврака кӳлленчĕк.
Именсе, шевле ун питĕнче
Хăй çине пăха-пăха киленчĕ.

Шурă хурăн. Пуç тавра çилхе.
Пурçăн тутăр çӳçи евĕр капăр.
Чĕрĕлĕх хускатнă хĕлĕхе
Хĕм сапан чĕрепеле туятпăр.

Калчасем чипер хĕл каçнă-ши,
Ĕçчене вĕсем мĕскер сунаççĕ!
...Тăвăр пек чуна урам хушши —
Туйăмсем хире халь туртăнаççĕ.

1968.

М 16162
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
БИБЛИОТЕКА Союза писателей Чуваш. АССР Инв. № 5912

## ТĂРИ

Хура тăпра сипетлĕхне ĕмсе
Сăмсаланатчĕç тулă та пăри.
Çĕр çумĕнчен çĕмрен пек çĕкленсе
Юрра яратчĕ канăçсăр тăри.

Кунта ачашшăн хумханмасть калча.
Çӳле кармашакан крансем кăна
Хăлаçланаççĕ улăп пек.
Анчах
Тăри шăрантарать яра куна.

Мĕн илĕртет çак стройкăра ăна!
Çĕршер машина хăлхана хуплать.
Тусан вĕçет е тĕтĕм явăнать,
Вăл пур — çак вырăна çес хапăллать.

...Хире çеç иленет вăл, тетĕр-и!
Этем ĕçченлĕхне мухтать тăри.

1970.

## ÇАВАЛ ÇИНЧИ ÇУМĂР

Килчĕ çумăр пĕлтермесĕр,
Систермесĕрех.
Карăнчĕ пир кумнă евĕр
Тӳперен çĕре.

Капăр хăюсем вĕçеççĕ
Вут-хĕм кăларса,
Хăю мар ку, çутă çиçĕм —
Йăлтăркка ăса.

Мăн Çавал — тавралăх чапĕ —
Тулнăçем тулать,
Кăкăр ĕмекен ача пек
Хир шыва сăхать.

Çумăр малалла васкарĕ.
Çĕн улачине
Хĕвелпе типмешкĕн çакрĕ
Кÿршĕ ял çине.

1968.

— Яш чухне çаплаччĕ
Хĕр чухне каплаччĕ,—
Иртнине илеççĕ
Ваттисем аса, —
Алра ĕç вĕретчĕ,
Чун-чĕре хĕретчĕ,
Чĕрĕ вăй тăратчĕ
Çăлкуç пек тапса...

Ай, умри аттемĕр,
Ытарми аннемĕр,
Куç тулли лараççĕ
Савнă ачăрсем:
Каччисем кашта пек,
Хĕрĕсем хĕвел пек,
Вĕсем мар-и сирĕн
Çамрăк çулăрсем!

1970.

Лăпкă тăман тухрĕ каçхине,
Çĕн çивитти сарас терĕ пуль.
Çил ачисем çĕн çивитти çине
Кăштах выртса канас терĕç пуль.

Пирĕн енче Хĕл Мучи хаяр,
Хаярлăхне сирес терĕ пуль.
Каяс кунăмсем те инçе мар,
Кайсан ыр ят юлтăр терĕ пуль.

1970.

## БУДИЛЬНИК ХОРĔ

Кунта ирпе
Чĕвен тăрса
Сар автансем юрра ямаççĕ.

Пӳлӗмсене
Янраттарса
Будильниксем шӑнкӑртатаççӗ.

Кунта хӗрсем,
Амӑшӗсем
Чӗнсе вӑратасса кӗтмеççӗ.
Сасӑ парсан
Шӑнкӑравсем
Салтаксем пек
Ыйха сиреççӗ.

Тем хушӑра
Комбинезон,
Резина атӑ
Тӑхӑнаççӗ.
Хӗвел,
Сар хӗрсене ыр сун,—
Вӗсем
Çӗн çурт тума васкаççӗ.

Ӗç хыççӑн
Стройка пикисем
Çурхи çеçке пек
Илӗртӳллӗ.
Кунта ташӑ каçне тесен
Çич çухрӑмран та
Каччӑ килӗ.

Вальссем лăпкаççĕ чĕрене,
Хаваслă мăшăрсем
Юхаççĕ.
Пушмакĕсем бетон çине
Çавра автографсем
Çыраççĕ.

Туртса тăсма
Кĕске çĕре
Халь хатĕр
Йĕкĕчĕ те хĕрĕ.
Анчах... тăсаймăн:
Çиччĕре
Концерт пуçлать
Будильник хорĕ.

1970.

## ЧУЛ ÇЫРАН

Капăр карлăклă кĕпер
Куртăм эпĕ Потсдамра.
Валакри пекех чипер,
Тăрă юханшыв умра.

Бетонланă ун тĕпне,
Айккисем — шап-шур чултан.
...Вăл салтакăн ĕмĕтне
Вĕçтерет инçе кунтан.

Аякра çуралнă ял,
Ват йăмраллă униче...
Эс юхса выртан, Çавал,
Икĕ касăн варринче.

Бетонпа шур чул хывман,
Шур хăваллă çыранна.
Çуркунне эс туллашан,
Кăтартан хаярлăхна.

Сан патна çитмен çав ал:
Вăрçă çăтнă вăй-хала...
Çак ĕçе вара, Çавал,
Ял хăварнă кăçала.

...Вăййа тухĕç çамрăксем.
Эсĕ илтĕн ун чухне
Шĕвĕр пуçлă пушмаксем
Çĕрĕпех шаклатнине.

1970.

## КРАНОВЩИЦА

Çап-çамрăк хĕр автобусран
Стройка тĕлне çитсессĕн анчĕ.
Шеллерĕм çывăхран курсан:
Ăна тĕш ыйхă халь аванччĕ.

Хунав хăва пекех имшер,
Ăçтан-ха тухтăр вăй-хăвачĕ!
Анчах, кушак пек йăрăскер,
Вăл кран çине вăр-вар хăпарчĕ.

Стрела вылярĕ аллинче,
Блок хыççăн блок çĕклерĕ, хучĕ.
...Юмахри пек, куç умĕнчех
Пике асамлă улăп пулчĕ.

1970.

# Çĕршыв салтакĕсем

## ПУÇЛАМĂШĔ

Килти çипуçпалаччĕ
Вĕсем ĕнер кăна,
Паян пĕр пек тум пачĕ
Пурне те старшина.

Хуллен чĕриклетеççĕ
Çу сĕрнĕ атăсем,
Сăнсем ӳкерттереççĕ
Çап-çамрăк салтаксем.

— Эс васкарах кăларччĕ,
Фотограф, вĕсене,
Часрах ярса парасчĕ
Атте-аннесене...

Пилоткăсем çиçеççĕ
Ильич çăлтăрĕпе.

— Пěртăвансем пек, — теççĕ,—
Эпир йăлтах пĕр пек.

...Ним хускалми тăраççĕ
Çĕршыв салтакĕсем,
Инçе-инçе вырттаççĕ
Вĕсем утас çулсем.

1969.

## ТАВТАПУÇ

Тавтапуç, тăван уй-хирĕм,
Тав çине тата мĕн тес!
Сан кĕпÿ пек ман тумтирĕм,
Эс пилленĕ симĕс тĕс.

Тавтапуç, тăван вăрманăм,
Тав çине мĕскер теем!
Пакунсем ем-ешĕл манăн —
Эс пилленĕ çулçăсем.

1970.

## МУСКАВ УРАМĔНЧЕ

Пыраттăмăр Мускав урамĕпе.
Çие тин çеç çар тумĕ тăхăнсаччĕ.
Утма аван оркестр çеммипе,
Чĕремĕрсем çăлкуç пекех тапаççĕ...

Иртетчěç ротăсен колоннисем,
Васкатчě батальон вокзал енне.
Сулатчěç алă хулари çынсем
Çула ăсатнă май салтаксене.

— Ывăлăмсем, пулăр унта хастар,
Эпир самант та манмăпăр сире! —
...Çак сăмаха шур çÿçлě карчăк мар,
Çěршыв каланăн туйăнчě пире.

1970.

## ПОЛК ЯЛАВĚ

Ялав — хěрлě парăс —
Вут-хěмěн çунать.
Çар чаçě пěр харăс
Ун хыççăн утать.

Парăс кимме
Çил май хăвалать,
Тинěсрен килне
Çитме пулăшать.

Анчах та ялав
Çиле пăхăнмасть,
Хěлле е çулла —
Ана та пăхмасть.

Çĕршыв чĕнсен —
Вута ыткăнать.
Салтак чунĕнче
Чĕртет вăл кăвайт.

Чĕре çилĕ-хĕмĕ
Ăшра каплансан,
Снаряд танлашаймĕ
Унпа нихăçан.

Ялав — парти сăнĕ,
Ялав — чыс палли,
Ырми çĕр ĕçченĕ,
Рабочи алли.

Çунать çулăм евĕр
Патвар та хĕрӳ,
Тĕллевĕ ялан пĕр,
Вăл — Çĕнтерӳ.

1970.

Халь те асра:
Тăваттăмĕш класра
Мана учитель глобус йăттарсаччĕ.
— Çĕр чăмăрĕ умра,
Епле вăл çап-çавра,

Ан ўктĕр,— терĕ,—
Ҫирĕпрех тытсамччĕ.

Эп ҫирĕмре.
Ҫар тумĕ ҫийĕмре.
Самант — ҫĕкленĕ сывлăша ракета.
Сыхă эпир ялан,
Пирĕн алра паян
Ҫав глобус мар,
Ҫил-тăвăллă планета.

1970.

## ЭЛЬБА ХĔРРИНЧЕ

Вăштăр ҫил вĕрет-ҫке уҫҫăн,
Хурăна хумхантарать,
Походра ĕшеннĕ хыҫҫăн
Батальон канма ларать.

Йывăр аттуна хыватăн,
Тинкерен инҫе-инҫе:
Шетмĕ хăви пек хăва та
Пур-мĕн Эльба хĕрринче.

Тăрă шыв юхать илемлĕн,
Ик енче — уйсем-хирсем.
Эс пăхса епле киленмĕн —
Чăвашри пекех вĕсем!

Йывăç айĕнче курнаççĕ
Туслă халăх ялĕсем.
Сан умна каллех тухаççĕ
Шупуçсем, Вăрманкассем...

Шухăш Атăл евĕр анлă,
Эльба евĕр сарлака.
Çав сăнсем ялан тăванлăн
Вăй кўреççĕ салтака.

Камшăн Эльба — çутă Днепр,
Камшăн — Днестр е Кура,
Кашниех аса илетпĕр
Çĕршыва калаçура.

Амуртан виçме пуçлатпăр
Унăн анлăш-тăршшĕне,
Чуллă ту пулса сыхлатпăр
Хĕвеланăç чиккине.

1967.

## ПИРĔН РОТА

Интернационаллă рота
Тетчĕç пирĕн ротăна.
Чăн та, çукчĕ кам кăна:
Йăрă калмăк та, ойрот та,

Йышлă вырăс каччисем,
Виç узбек, икĕ туркмен,
Пурччĕ кулăшçă эрмен,
Пурччĕ Латви ачисем...

Пĕтĕмпе вунçичĕ наци
Салтаксен пĕр çемйинче,
Ĕç тăвас-тăк — хуш кăначчĕ,
Пурнăçланă çийĕнчех.
Хурала мĕне кайсассăн
Чыслă тытнă тивĕçе,
Тав е ят пайлас пулсассăн —
Кашниннех пĕр пек виçе.
Пушă вăхăтра вара,
Çирĕпленнĕ йăлапа,
Пурте уçă сасăпа
Шăрататтăмăр юрра.
Лацис пуçлама ăстаччĕ,
Фахрутдинов тăстарма,
Михайленко — шăхăрма,
Тарба — пирĕн музыкантчĕ...

Чунсене çĕклет «Катюша»,
«Сулико» юлмасть унран,
Тутарла «Кара урман»
Янрататтăмăр пĕр хушă.
Чăваша хисеп тăватчĕç
Юрласа «Вĕç, вĕç куккук»,

Николаев вӗҫнӗ чух
Юрӑпа салам яратчӗҫ...

Юрататчӗ генерал та
Тус-тӑванлӑ ушкӑна.
...Интернационаллӑ рота
Тетчӗҫ пирӗн ротӑна.

1970.

## А Н Н Е Н Е

Ҫӳл тӳпере хуркайӑксем ял урлӑ
Ӑшӑ енне вӗҫетчӗҫ кӗркунне.
Каяс килмен пек йывӑррӑн, салхуллӑн
Вӗсем сулатчӗҫ ҫунаттисене.

Ырӑ сунса ун чух санпа, анне,
Инҫе ҫӗре каян кайӑксене
Шеллеттӗмӗр... Тахҫанччене пӑхса
Тӑраттӑмӑр эпир, алӑ сулса.

Тӑван ялтан эп халӗ инҫетре,
Кӗрхи куна ир-ир хуплать тӗтре,
Каштанӑн кӗмӗл пек ҫулҫисене
Ҫил майласа хурать ура умне.

Хуркайӑксем каллех ӑшша вӗҫеҫҫӗ,
Каллех эп ал сулатӑп вӗсене,

Кикак туссен сассийĕнче, аннеçĕм,
Илтетĕп санăн саламусене.

Пĕлетĕп, эс мана аса илетĕн,
Çĕрле, хаваслă вăйă салансан,
Эп шăппăн-шăппăн кĕрессе кĕтетĕн —
Анчах та ывăлу инçе санран.

Халь ман хыçра—куç виçейми пуянлăх,
Хавхаланса тапать вĕри чĕре.
Хама пăхса ӳстернĕ аслă халăх
Ячĕпеле тăратăп чикĕре.

1960.

## ХĔЛ ПУÇЛАМĂШĔ

Командир приказне пурнăçланăн
Кĕрхи çил сывăрмасть çĕрĕпех.
Çĕр те шăннă, шывсем те
пăрланнă,
Сапăнать кассăн-кассăн кĕрпе.

Ирхине урама эс тухан та —
Шур кавир илĕртет сан куçна.
— Пĕр çĕре!— янăрать ак команда,—
Çĕлĕксем валеçет старшина.

1967.

## МАНА ХАЛЕХ АН КĔТĔР...

Курап:
Хирсем мăнаçлăн хумханаççĕ,
Илтеп:
Çĕр çемĕпе сĕрлет вăрман
Анчах сиртен инçе-çке эп, сухаçă,
Пин çухрăмра
Утса çӳреп паян.

Упкевĕм çук!
Чĕрем тапать хастаррăн,
Мăнаçлă туйăм
Капланса килет.
Тантăшăмсем упраççĕ
Халăх çарĕн
Чапне те мухтавне
Яланхиллех.

Çĕнтересе шанса
Килме хăяймĕ
Сад пек çĕре
Халь выçă куç тăшман.

Хурах, ан хапсăн!
Ĕмĕтӳ тулаймĕ —
Салтак алли
Курок çинче ялан.

Ытах,
Каллех инкеклĕ вут тивсессĕн

Çĕршер хут çуннă аслă тĕнчене
Арăслансем пек,
харăссăн, çиллессĕн
Тапранăпăр ылханлă йăх çине.

Тăван хирте
Ман пиçрĕ шухăш-кăмăл,
Васкаççĕ-тĕр унта халь
Юлташсем.
Эп вырăттăм:
Юлинччĕ тикĕс хăмăл,
Эп çулăттăм:
Юлинччĕç паккуссем.

Мана халех
Ан кĕттĕр Турикас,
Эп чикĕре тăрап автоматпа.
Эп çĕршыва сыхлатăп.
Ку — приказ,
Эп пурнăç ячĕпе тунă тупа.

1970.

## Ю Р Ă

Юрлать Тхи Лиен —
янрать вăрман,
Юрлать Тхи Лиен —
чĕтрет тăшман.

Янрать тавра:
хěр — партизан
Ярать юрра
хěвел ансан.
Полковнике сивчир ерет,
Вăл кěç тарлать,
кěçех — чěтрет:
«Никам та çук-çке Сонгмире,
Кам питлеме хăять пире!!»
Мулшăн çунан
мěскěн чуна
Кашни сас-чěвě хăратать:
Пěтерне-çке пиншер çынна,
Тен, çавсенчен пěри юрлать!
Юрлать пике —
сасси юхать,
Каç сěмěнче
каять инçе.
Вăл курайманлăха куçать
Тăвăлланан кăкăрсенче.
Юрлать пике —
сасси чěнет
Тăван çěршыв ачисене:
«Вьетнам парăнас çук... Çěкленěр,
Аркатăр тăшмана,
туссемěр!»
Полковник çěрěпе урать,
Кăшкăрашать, шăлне хăйрать,

Аптранăран, вăрман енне
Пеме хушать салтаксене,
— Огонь!..
Вĕçеççĕ пульăсем.
Анчах... янраççĕ юрăсем.
Айван полковник ăнланмасть:
Юрра тăхлан та
Чараймасть.

1970.

## ÇĂЛТĂРСЕМ

Çут çăлтăрсем — этем сапан хĕмсем,
Çĕршывшăн тунă паттăрла ĕçсем,
Ак маршал çăлтăрĕ.
Е хамăр Андриян
Кăйкăр пекех çунатлă пулнăран
Туяннă çăлтăрсем. Вĕсем —
Прометей пек патвар çын чĕрипе
Кремль çинчи рубин пĕрлешнипе
Çуталнă çăлтăрсем,
Мухтавлă халăх парнисем.
Тантăшăмсем
Çĕлĕк çине çăлтăр çакса çӳреççĕ,
Мускав шевлин хăвачĕпе хĕреççĕ
Чун-чĕрисем.

Ак ротăсем иртеççĕ,
Бетон çинче хĕм сирпĕтеççĕ...

Çук, тимĕр такан мар вут-хĕм сапать,
Салтак чĕри çапла тапать.
Эпир — çав пĕрлĕх тыттинче паян:
Çич ют килсен,
Мускав чĕнсен,
Тăшманшăн — яланах тăшман,
Тăваншăн — яланах тăван.

1970.

## ТУС ПУЛАР-И, ЭРИХ ВЕРНЕР!

Сан килӳ — Одерçи Франкфуртра,
Манăн кил — Атăлçи Шупашкар.
Эпĕ сирĕн патра хăнара,
Кил-ха, Эрих, ларар юнашар.

Эсĕ те, эпĕ те — çирĕмре,
Эс те, эп те пакунлă паян.
Ĕмĕтсем сан та, ман та пĕрре:
Тĕнчене вут ан хыптăр нихçан.

Ман атте вăрçăран таврăнман,
Пуçне хунă Берлин патĕнче.
Эсĕ те аçуна курайман:
Вăл тухман Сталинград ункинчен.

Раççее малтан тарăхнă эс,
Тавăрма та шутланă ӳссен.

Анчах мĕн сăлтавпа хирĕçес,
Айăп çук-çке пачах вырăссен.

Акă иккĕн ларатпăр пĕрле,
Ăшă кулă вылять питсенче.
Мĕншĕн вилĕм сунас пĕр-пĕрне!
Мĕн çитмест пире çак çĕр çинче!

Ав епле вăйлă сан аллусем,
Ик кăвак куçу ăслăн пăхать...
Халь эпир — чикĕри салтаксем,
Кунçулне пире халăх шанать.

Айта, Эрих, татар та чечек
Пуç таяр ман аттен тăприне,
Çук, юлташăм, эпир вĕсем пек
Пăшалпа тĕллес çук пĕр-пĕрне.

Эп — чăваш, эсĕ нимĕç пулни
Тус пулма чăрмантармĕ пире,
Пĕрлешер-и нихçан уйрăлми,
Тăванла хураллар-и мире!

1967.

Вăрнар ен вăрманĕ евĕр хырлăхра
Йĕп чиксен куç курмĕ—каçĕ хуп-хура.

Эй, салтак, тăр сыхă — ĕç тĕнчи
канать.
Тăван халăх хăйĕн ывăлне шанать.

Асăрха, шумасть-и, авă, тĕмеске,
Куçнăн туйăнмасть-и сана темĕскер!
— Кам килет! Стой!.. — уççăн
сывлăша çурать,
Командир та хирĕç сассине парать.

Çăмăллăн, хаваслăн сан чĕрӳ сикет:
Миршĕн те телейшĕн иртрĕ ик сехет.
Шанчăклăн поста халь юлташу
юлать,
Пĕтĕм таврана вăл тимлесе сăнать.

1963.

## КУРМА КИЛСЕН

Тем калаçса юлать хыçра калча,
Пуçне таять йăмраллă укăлча.

Хĕвел шевли вылять урам тулли,
Хавас янрать ача-пăча кулли.

Уçатăп эп хуллен калинккене,
Килхушшинче кăштăртатать анне.

— Ай, ывăлăм, курассăн туйăнман...
— Халь килтĕм ĕнтĕ... Хăв мĕнле
пурнан!

...Пас тытнă унăн хуп-хура çӳçне,
Картсем те хутшăннă çамки çине.

Аннем, эс ларăн ман çине пăхса,
Пӳрт телейпе тулнишĕн савăнса.

Анчах... иртсессĕн шутлă ик эрне
Каллех эп кайăп чикĕ хĕррине.

Тăван çĕршыв хуралĕнче тăма
Алла каллех эп тытăп автомат.

Хирте парка çĕкленĕ тырă-пулă,
Укăлчара шăпланмĕ вăйă-кулă.

1964.

Эс кур, юлташăм, тинкерсем:
Вĕсем епле хĕрсе ĕçлеççĕ,
Хуллен çеç юрă ĕнереççĕ,
Хула илемлĕ пултăр, теççĕ, —
Чечек лартаççĕ салтаксем.

Çут çӑлтӑр çакнӑ çамрӑксем
Çынна нихçан та юнамаççӗ,
Вут тивертесшӗн хыпӑнмаççӗ,
Нихӑш çӗре те хапсӑнмаççӗ
Çут çӑлтӑр çакнӑ çамрӑксем.

Тӑшман пуçне çӗклес пулсан,
Самант — кар тӑрӗç салтаксем.
Самант...
Анчах халь савӑнса,
Нӳр тӑпрана кӑпкалатса
Чечек лартаççӗ салтаксем.

1966.

## Ç Ӑ Л

Тӗлӗкре паян
Куртӑм эп сана:
Шыв ӑсма каян
Эсӗ çырмана.

Хӑнине кӗтет
Тарасаллӑ çӑл.
Тем аса килет —
Эс кулатӑн йӑл.

Ак вӗççе çитен
Ман пата, чикке.

Сивĕ шыв сĕнен
Пограничнике.

Хĕмленет чĕре...
Тав, сипетлĕ çăл!
Тусăмçăм, пире
Паллаштарнă вăл.

1969.

## САН ÇЫРМАЛЛА

Полигонри танкистсене
Ислетрĕ çумăр çĕрĕпе.
Ку темех мар салтаксене —
Ирĕлес çук-çке сахăр пек.

Çур çухрăмри мишеньсене
Ала пек турĕç пульăсем.
Ак мĕн кĕтет тăшмансене
Чĕрре кĕрес пулсан вĕсем!

Тул çутăлать. Автоматсем
Тăраççĕ пирамидăра.
Сан ăмăрткайăк-тусусем
Канаççĕ лăпкă ыйхăра.

Иртет казармаваррипе
Атте пек çывăх старшина.

Пулатăн эс çыварнă пек,
Утиялпа витен пуçна.

Шухăш вĕçет. Куç умĕнче —
Полигонри хастар сăнсем.
Тăван çĕршыв хуралĕнче —
Пакунлă, çăлтăрлă сынсем.

Суйлатăн эс сăмахсене:
Сан çырмаллах, сан çырмаллах,
Юлташусен паттăрлăхне
Тивĕç сăмах сан тупмаллах.

1966.

## ПИРĔН НЕСĔЛ

Ильич йыхравĕпе çĕкленнĕ,
Хĕç тытнă манăн асатте,
Чапаевпа пĕрле çӳренĕ,
Çапăçура яман ятне.

Çăхан вĕçсе килсен тискеррĕн
Сарса хĕреслĕ çунатне,—
Атте чĕнтерессе кĕтмерĕ,
Васкарĕ военком патне.

Анне тем сиснĕн ĕсĕклерĕ,
Нихçан та манмăп çав куна:

Ик вӑйлӑ аллупа ҫӗклерӗн,
Атте, эс пӗчӗк ывӑлна.

Фронтран киле таврӑнаймарӑн,—
Пуҫ хутӑн Одер хӗрринче.
Анчах вилмерӗн, ҫухалмарӑн —
Яту сан — халӑх чӗринче.

Тӑван ҫӗршыв мана ӳстерчӗ,
Вӑй-хал вылять ик аллӑмра.
Манра ҫӗршывӑн хӗнӗ-терчӗ,
Ҫӗршыв телейӗ — юррӑмра.

Ҫав телее туртса илмешкӗн
Тӑшман тӑссассӑн аллине —
Эп тухӑп, тухӑп ҫӗнтермешкӗн
Каппайчӑк юнӗҫенсене.

Эп ҫапӑҫӑп! Ан тив, ҫунтартӑр
Ман тарӑху ҫич ютсене,
Асаттепе атте пек паттӑр
Пулма вӑй парӗ Ҫӗр-анне.

1968.

## КУҪҪУЛЬ

Ҫынсем сӑваплӑн чӗрере усраҫҫӗ
Тӑван ҫӗршывӑн Ҫӗнтерӳ кунне.

Ялавсемпе урамсене тухаççĕ,
Чечек хураççĕ палăксем умне.

Юлташусем чунтан саламласассăн,
Вĕсен хисеп парнисене тытсан,
Хăвна каллех эс вăрçăра туятăн,
Йăваш пиччемĕр, паттăр ветеран.

Сывлатăн ассăн... Ал çинчех пуç хунă
Тусу тухать, тен, сан куçу умне.
Тен, астăван юпа пек тăлăх юлнă
Ача хăвна пăхса тĕмсĕлнине!

Шухăшусем пăтраннăçем васкавлăн,
Сисместĕн те куçу шывланнине.
Салтак чĕри! Сана ăçтан улталăн,
Ăçтан мантарăн мĕн тӳснисене!

Умра — чĕрĕ юнпа пĕвеннĕ Атăл,
Хыçра выртса юлаççĕ вилесем,
Кĕрлет тагти-сыпписĕр канонада,
Сар хĕвеле хуплаççĕ пушарсем.

Кашни халех пуçне хумашкăн хатĕр,
Çуралнă çĕр çеç юлтăр çăлăнса...
Кăвак Дунай, çăра тĕтреллĕ Одер
Е Эльба хумĕсем айне пулса,
Мала çеç талпăнать,—
Тăван çĕршывшăн,

Телейшĕн, миршĕн ҫапăҫать салтак.
Малтан мала!
Шит хыҫҫăн шит эс йышăн,
Пăчлантăр ĕмĕре хура рейхстаг...

Сан умăнта асаплă вăрҫă ҫулĕ
Кино ленти пек тăсăлса выртать.
...Тăп-тăрă сывлăм пек таса куҫҫулĕ
Хурҫă ҫынран пăчăртанса тухать.

1966.

Дневальнăй уҫрĕ
Чӳречесене,
Яр уҫă сывлăшпа
Казарма тулчĕ.
Ман
Канлĕн ҫывăран юлташсене
Симпыллă варкăш
Ăшшăн сывлăх сунчĕ.

Ҫӳренĕҫем анне пек лăпкаса,
Вăл кĕчĕ йăпшăнса
Салтак чунне.
Ачаш сирень сапакине курсан
Хитре ӳкерчĕк
Тухрĕ куҫ умне:

Шап-шурă çурăлать
Çĕмĕрт пахчи,
Пике пырса ларать
Тенкел çине.
Инçе-инçе
Пострa тăран каччи
Пăшăлтатса
Калать унăн ятне.

1962.

— Привал!
Хуллен хăвалăха ансан,
Илтен çăлкуçăн
Шăнкăр сассине.
Пружина пек хулсем çине выртса,
Ăш каниччен
Ĕçен çĕр сĕткенне.

Вăр çавракa
Хумсен ытамĕнче
Темччен сăнатăн
Çăлтăрлă сăнна.
Тăван çĕршывăн
Тĕкĕрĕ çинче
Эс тĕрĕслен
Чунри тасалăхна.

1970.

## ХУРĂНСЕМ

Çилпе туратчĕ
Хурăн сар çӳçне.
Ăна эп алă султăм:
— Сывă пул! —
Вăл сĕлтрĕ ман енне
Ярапине —
Ăнлантăм эп —
Вăл сунчĕ ырă çул.

Çапла эпир ăсантăмăр.
Эрне
Пире силлерĕ
Пуйăс урапи.
Çăра тĕтреллĕ
Эльба хĕррине
Çитерчĕ яшсене
Салтак шăпи.

Кунта та
Çап-çавра тенкисене
Сапаççĕ
Ретĕн ӳснĕ хурăнсем,
Мĕскер çинчен
Юрлаççĕ юррине,
Мана мĕскер
Каласшăн-ши вĕсем!

Виҫ ҫул тӑнлап
Ҫак йывӑҫсен шавне,
Вӗсен хумханӑвне
Курап ир-каҫ.
Анчах
Тӑван килтен тухнӑ чухне
Шур хурӑн пуҫ тайни
Асран каймасть.
1963.

## ЧИКӖРЕ

Лӑпкӑ каҫ...
Чун савнӑ сар хӗре
Вӑйӑ хыҫҫӑн ӑсатас чухне
Пӗр-пӗччен тӑрать вӑл чикӗре
Ҫирӗппӗн тытса автоматне.

Куҫ хӗсет пек уйӑх тӳпере,
Илӗртесшӗн каччӑ чӗрине.
Ҫумӑр та тӗтре те пурпӗрех
Сӗвӗртеймӗҫ унӑн тимлӗхне.
1964.

## ПОСТРИ ИР

Вӑрманти концертӑн
Савӑк кӗввине
Итлесе тӑратӑн
Эсӗ ирхине.

Ташша кăларасшăн
Хĕрлĕ хĕвеле
Пур кайăк хавассăн
Кĕвĕ кĕвĕлет.

Тăван кил-казарма
Умĕнчи сирень
Шур çеçке кăларнă
Ялтилле хитрен.

Тимлĕ эсĕ, сыхă,
Пурпĕрех шевле
Çиçĕм евĕр шухă
Çывхарса килет.

Апрель уçрĕ алăк —
Çитрĕ çуркунне.
...Пăханмасть çанталăк
Часовой влаçне.

1963.

## ЙЫВĂÇСЕМ

Тăван ялта,
Хавас тăвайккинче
Ача алли
Кӳтет пуль сивĕпе,
Эпир кунта

Раштав уйăхĕнче
Лартатпăр йывăç
Ырă ĕмĕтпе.

Виç çул иртсен
Каллех киле каятпăр,
Ĕçе тухатпăр
Çар тумне хывса...
Шинеллĕ йывăçсем,
Эсир юлатăр
Çĕршыв чиккин
Хуралĕсем пулса.

1962.

## ТРЕВОГА

Тревога!
Янрать шăплăхра аслати пек пĕр сас,
Çав сасă салтакшăн — чи пысăк приказ.

Тревога!
Сыв пулăр курса пĕтермен тĕлĕксем —
Казармăна килнĕ вăтанчăк хĕрсем.

Самант!
Эс тумланнă, алра — хĕçпăшал,
Вĕрет, хĕмленет вучахри пек вăй-хал.

Тухса вĕçнĕ пек автомат пульлисем
Чупаççĕ машина паркне танкистсем.

Тревога —
Чи витĕмлĕ çиçĕм-шăнкрав,
Çĕршыв сасси евĕр
янрать çав йыхрав.

## СТАРШИНА

Чăнкăр, чăнкăр, чăнкăр
Тăвать анлă кăкăр.
Тусăмсем, ан шавлăр,
Пурте шăпăрт тăрăр.

Салтак пулса ӳснĕ,
Темĕн те пĕр тӳснĕ.
Çĕршыва сыхланă,
Тăшмана лăсканă.

Çапăçман мухтавшăн,
Çапăçнă Мускавшăн.
Ирĕке упранă,
Нишлĕхе таптанă.

Хăш çулпа çӳренĕ,
Хăш йытта йĕрленĕ,—
Ан тĕпчĕр... Ăнланăр,
Хăвăр чухласамăр.

Орденсене пăхăр,
Медальсене сăнăр,—
Вĕсем — маяксем пек,
Çухрăм юписем пек.

...Чăнкăр, чăнкăр, чăнкăр
Тăвать анлă кăкăр.
Тăнлăр, пурте тăнлăр,—
Калаçать çут çăлтăр.

1970.

## МАМАЙ САРТЛĂХĔНЧЕ

Хире-хирĕç вĕçеççĕ
Тўрккес снарядсем,
Бомбăсем
Çĕрлехи кашкăрсем пек
Улаççĕ.
Тăван çĕр кăкăрне
Сыхлакан салтаксем
Вăрçăри сас-чĕве
Кĕнеке пек
Вулаççĕ.

Ту çинче курăк çук,
Тимĕр-тăмăр кăна.
Чĕрĕ юнлă Мамай,
Сан миçе пин суран-ши!
Пурпĕр эс йынăшман,

Кăларман çаççуна,
Курайманлăх —
Çав чăтăмлăх ашшĕ.

Сталинград ялкăшать,
Аслă Атăл çунать...
Леш енчи çыранта
Халь пире вырăн çуккă!
Çут тĕнче хупланать,
Çапăçу пуçланать.
Çĕрпӳртре çĕрĕпех
Куç хупмасть
Пĕртте
Жуков.

Тыткăçларĕ тупа
Чĕрепе чĕрене,
Хĕмленен вут ăшне
Паттăрсем ыткăнаççĕ.
Ав килет пулăшу!
Дон енчен сăрт çине
Рокоссовскин хаяр
Танкĕсем талпăнаççĕ.

Çĕрĕм-шывăм анне
Тинкерет витĕрех:
«Аçу пек эс пултарăн-и
Маншăн тăмашкăн!»

**Эпĕ кам!**
**Турист çеç.**
**Чунра айăп пур пек...**
**Йывăр, йывăр кунта**
**Курма çеç хăпармашкăн.**

1970.

# *Ан васка, пикеçĕм*

## АН ВАСКА

Ан васка, пикеçĕм, ан васка,
Килелле утмашкăн ан васка.
Чĕрери калас сăмахăма
Эп ĕлкĕреймерĕм калама,
Ан васка...

Ан васка, савниçĕм, ан васка,
Алăкна уçмашкăн ан васка, —
Кăшт кăна сăнна пăхса илем,
Çĕн вăйпа çунатланса çӳрем,
Ан васка...

Ан васкаччĕ, чунăм, ан васка,
— Сывă пул, — темешкĕн ан васка.
Санпалах пуласшăн ман чĕрем,
Саншăн çеç вăл тапĕ ĕмĕрех,
Ан васка...

1958.

Çĕмĕрт çеçкине эп татрăм,
Ай, мĕнпе çыхайăп-ши!
Çамрăк çеç качча юратрăм,
Ай, мĕнле калайăп-ши!

Çивĕт хăйăвне салтам та
Çĕмĕрт çеçкине çыхам.
Ăшшăн-ăшшăн йăл кулам та
Куçăмпа йăлтах калам.

1958.

Те маттурччĕ, те айванччĕ
Ун чухне эпир санпа,
Пурпĕрех пире аванччĕ
Каçăн-каçăн тĕл пулма.

Вырăнне такам суйланă:
Çав лапамлă улăхра
Сар хĕвел те хăвăрт аннă,
Çĕр те пулнă улахрах.

Никама асра тытмасăр,
Çут тĕнче çинчен манса,

Эс те эп — телейлӗ мӑшӑр —
Утнӑ алран-ал тытса.

Нимӗнле илем ҫитеймӗ
Ешӗл улӑх кӗпине,
Нихӑш вӑй та вӗҫертеймӗ
Ик чӗрен пӗр таппине.

... Ирхине Ҫавал тӗтреллӗ,
Кӑмӑлсем — салхуллӑрах...
Васкаман: унта хӗвел те
Таврӑнатчӗ каярах.

1970.

Уйрӑлас килместчӗ ман та, сан та:
Мӗншӗн пирӗн уйрӑм пулмалла?
Пурпӗр чӑмӑртарӑн та алла,
Эс васкавлӑ пуйӑспа ӑсантӑн.

Юлнисем салхуллӑн саланаҫҫӗ,
Хумханаҫҫӗ...
Эх, ҫав пуйӑссем,
Туссене инҫе илсе каяҫҫӗ —
Тунсӑхла вара, ир-каҫ кӗтсе.

...Акă эсĕ таврăнтăн. Утатпăр,
Савăнăç чĕресенче вылять.
Пуйăса та ахалех хурлатпăр,—
Вăл пире пĕрлештермеваскать.
1967.

## ХУРАВ

Ан çӳре ман пата, ан çӳре,
Пăхас çук сана эпĕ савса.
Каччă, каччă, ан пулччĕ сăпса,
Ан çӳре ман пата, ан çӳре,—
Урăххишĕн çунать ман чĕре.

Урăххишĕн çунать ман чĕре:
Пакун çакнă патвар йĕкĕте
Ирĕн-каçăн эп кун пек кĕтеп...
Урăххишĕн çунать ман чĕре,
Халĕ вăл инçетре-инçетре.

Халĕ вăл инçетре-инçетре,
Паян çеç илтĕм ун çырăвне,
Таврăнап тет килес çуркунне...
Халĕ вăл инçетре-инçетре,
Хĕвел аннă çĕрте, чикĕре.

Хĕвел аннă çĕрте, чикĕре
Çĕршыва куç хупмасăр сыхлать,
Пăшалне çирĕп-çирĕп тытать...
Çав салтакшăн çунать ман чĕре,
Ан çӳре ман пата, ан çӳре.

Кăвак сăрлă кимĕ,
Мăшăр шур кĕсмен...
Сан патна каçатăп
Эпĕ каççерен.

Эс юрлатăн юрă.
Çепĕç сассуна
Ăсатать çил ăшшăн
Ешĕл çырана.

Авăсать çăп-çăмăл
Мăшăр шур кĕсмен,
Мăшăрлă пуласчĕ
Ик вĕри чĕрен.

1970.

Алла-аллăн тытнă, ыткăнаççĕ,
Инçете васкаççĕ вакунсем.
Уйрăлу уйăхлăха кăна-çке,
Мĕншĕн-ха чуна салху, кичем!

Тапранма хăю çитерейместĕп
Халĕ çеç эс тăнă вырăнтан.

Хӑвалас пек, пуйӑсран иртес пек
Сан патна эп туртӑнап чунтан.

Тунсӑхӑм пин ҫухрӑма витинччӗ —
Тӑтӑр ырӑ кӑмӑлна уҫса.
Тӗл пулсан, пире телей кӳринччӗ,
Чи сӑпайлӑ туйӑма куҫса.

1969.

Тӗлсӗр харкашӑвӑн
Хытӑ хӑмӑлӗ
Тивмест урана,
Чуна тӑрӑнать.
Эс те мӑнкӑмӑллӑ,
Эп те мӑнкӑмӑллӑ —
Хӑшӗ пиртен
Маларах чарӑнать!

Чарӑнтӑм — чарӑнтӑн.
Пӑрӑнтӑм — пӑрӑнтӑн.
Пӗлеп: сан часрах
Сменӑна ҫитмелле.
Кайрӑн.
Сана тепре ҫеҫ
Курса юлӑттӑм!

Утап йăпшăнса
Чўрече еннелле.

1970.

## ПАРНЕ

Таврăнма хатĕрленетĕп
Çăва тухсанах.
Тĕл пулсассăн мĕн парнелĕп,
Тусăм, эп сана?

Пурçăн тăрăх çук салтакăн,
Пусмаран пуйман,
Хăв та лайăх ăнланатăн,
Мул пухма кайман.

Манăн йăлтăркка чĕкеçĕм,
Манăн тăр-тăри,
Çулăм пек вĕри чĕреçĕм
Саншăн таптăр-и?

Чечек кăшăлĕ ăсталăп
Утмăлтуратран,
Çепĕç аллунтан тыттарăп
Юратса чунтан.

Вĕçсĕр кăшăл пек пĕр вĕçĕм
Пурнăç пултăр-и,
Ман ытарайми чĕкеçĕм,
Манăн тăр-тăри.

1970

**Пĕрре вĕттĕн-вĕттĕн пусрăн,**
**Тепре акăш евĕр шурăн.**
**Шурă явлăкпа сулсассăн,**
**Туйăнтăн вĕçсе каяссăн.**

**Пĕтĕм халăх алă çупрĕ,**
**Куçусем рет тăрăх чупрĕç.**
**Тем сăнарăн, тем шырарăн —**
**Эпĕ çуннине курмарăн.**

1969.

**Çумăр çурĕ — шăнтрĕ лартрĕ.**
**Тĕкĕр евĕр тротуар**
**Атăлçи пек йăлтăртатрĕ,**
**Йăлтăртатрĕ Шупашкар.**

**Юнашар утса пыраттăм,**
**Йăр çеç шурĕ хĕр ури.**
**Васкасах ăна тăратрăм:**
**— Мĕн, кăшт çеç ўкмерĕр-и!**

**Чĕрене хĕрў хĕм сапрĕç**
**Писнĕ çĕмĕрт пек куçсем.**
**Аллăмра çемçен вылярĕç**
**Хĕрĕн ăшă пўрнисем.**

Эп хитре сăмах шырамăп
Вăл мана савас пулсан.
Ăна ĕмĕр ÿкме памăп
Ăнсăртран ура шусан.

1959.

Çурăлакан чечек пек чÿхенсе,
Çунат сарса ташларăн эс ĕнер.
Çав телейпе ачашшăн киленсе
Çÿрерĕм эп, вĕçмешкĕн хатĕрскер.

Паян выртатăн эсĕ вырăнпа
Сивчир ÿкернĕ ураран сана.
Савăнăçна пайларăн эс манпа,
Эп пайлăттăм икке ыратăвна.

1970.

Ăнсăртран,
Эс такама качча кайсан,
Эп урăх никама та юратаймăп,
Авланмăп.

Манаймăп сан çинчен.
Нумай çулсем иртсен

Эс пурнакан çурта
Эп кĕрĕп çĕр хута.

Утмăлтурат пек куçсене,
Шуралнă çӳç пĕрчисене
Эп пăхăп тĕмсĕлсе,
Тĕлĕнсе.

Эс пĕлмĕш пулмăн.
Хĕрелĕн,
Çухалăн...
Тинкерĕ упăшку. «Кам-ши ку анчăк!»
Эс хĕрĕхе кайнă ятпа
Саламлăп виçĕ сăмахпа,
Унтан уттарăп хам çулпа
Сухаллă та
телейсĕр çапкаланчăк.

1969.

Юрпикеçĕм, юрпике,
Эп курап сана, курап:
Шурă-шурă кĕрекпе
Эс ташлатăн ман умра.

Ăмсанаççĕ-ши сана —
Çутатаççĕ хунарсем.

Çавăранан эс, çавăранан,
Вĕлтлетеççĕ урусем...

Çĕнĕ уйăх — куç харши,
Пĕлĕт тĕслĕ куçусем.
Ман çине кăшт пăхмăр-ши,
Шурăмпуç çăлтăрĕсем!

Юрпикеçĕм, юрпике,
Хулари каçхи тăман.
Ĕмĕтри чипер хĕр пек
Сăвăça эс туйăнан.

1969.

Çук, çук,
Санпа ĕç çук ман урăх,
Çул-йĕрĕм тепĕр еннелле.
Пĕлеп:
Эс юрлакан кив юрă
Янрать юлташшăн çĕнĕлле.

Эп кайрăм.
Кăлăх тăрăшатăн
Чĕртесшĕн сӳннĕ вут-хĕмне.
Сисеп:
Хыçран пăхса юлатăн
Çавăрасла шыв юхăмне.

1970

## ÇĂКА

Ларать ял хĕрринче
Йывăç — пике,
Ун йăрăс пĕвĕнче —
Кĕске кĕпе.

Тулли кăна ура,
Пурçăн чăлха,
Хитре хăйне кура
Çамрăк çăка.

Пурне те килĕшет
Симĕс тухъя,
Яш-кĕрĕм хĕвĕшет —
Тухать вăййа...

Ӳсет ешĕл пике
Уничере,
Хĕрсем те ун пекех
Вунçиччĕре.

1970.

— И, мĕн çутă тĕнчере!
— Çăлтăр çутă тӳпере.
Вăйя тухрăм каçхине —

Çулăм хыпрĕ чĕрене:
Кӳршĕ хĕрĕн куçĕсем —
Чи илемлĕ çăлтăрсем.

— И, мĕн ăшă тĕнчере!
— Хĕвел ăшă тӳпере.
Тусăмпа чух чун-чĕре
Вĕриленчĕ сивĕре:
Савнă хĕр сăмахĕсем —
Сар хĕвелĕн хĕмĕсем.

— И, мĕн вăйлă тĕнчере!
— Çиçĕм вăйлă тӳпере.
Куртăм — пĕлтĕм: юрату —
Чи асамлă ырату:
Çиçĕм çиçет самантлăх,
Чĕре савать яланлăх.

1964.

## ÇУМĂР

Ĕмĕтри пек иррăн
Иртекен çулла
Эс мана ăсатрăн
Инçетри çула.

Çӳпçерен тăкатчĕ
Çумăр ир енне,

Тумламсем анатчĕç
Сан питӳ çине...

Миçе уйăх ĕнтĕ
Иртрĕ унтанпа —
Миçе хут йĕпентĕм
Витĕр шалкăмпа!

Окопра пăрлантăм
Кăчăрти шывра,
Исленсе пăслантăм
Чикĕри пострa.

Ирхи çумăр шавĕ
Хăлхарах тăрать:
Пĕлĕтсен чаршавĕ
Таврана хуплать.

Тумламсем анаççĕ
Сан питӳ çине,
Куçусем кулаççĕ —
Пăхнă ман енне.

1963.

## ÇĔНĔ ÇУЛ КУНĔ

Çĕнĕ çулăн çĕн юрĕ
Иртенпех çунăçем
Шупăр витнĕ пек шурă
Трамвайсем те çуртсем.

Тинкерсен куç шармалăх
Йăлкăшмасть халь тавра,
Киленет пурпĕр халăх:
Уяв кунĕ — чунра.

Эс — сирень çеçки евĕр
Пархатарлă, таса.
Хула тăрăх çӳретпĕр
Алран ал тытăнса.

Аллунта эп туятăп
Вут-хĕлхемлĕ ăшша,
Чĕрере эп упратăп
Тахçанхи шухăша.

«Савăк мар пĕччен пуçăн
Вăтăра çывхарсан...»
Мĕн-ши тейĕн эс, тусăм,
Эп çапла каласан!

Мамăкран карнă чатăр, —
Сар хĕвел çăвăнать.
Кăпăкне çеç куратпăр:
Тăкăнать, тăкăнать.

1970

## ХĂНАСЕМ КАЙСАН

Сĕтел çинче — çап-çут черкке.
Пайлар-и эрехне икке.

— Çук валеçмелĕх, — тетĕн эс, —
Пĕччен ĕç, ман ĕçес килмест...

Ларсам, тăванăм, юнашар,
Ĕçер пĕрле, çурмаллашар.

Эпир — çемьеллĕ паянтан,
Мĕн пуррине пайлар ялан.

1970.

## ВĔРЕНЕ

Вĕрене, вĕрене,
Эпир лартрăмăр иккĕн сана
Виçĕмçул çуркунне.

Вĕрене, вĕрене,
Эс кӳретĕн илем пахчана,
Саралан кĕр енне...

Вĕрене, вĕрене,
Çăлтăр евĕр çулçу хĕм сапать
Тăрă шыв хĕррине.

Вĕрене, вĕрене...
Халь çав хĕр инçетре пурăнать...
Мускавра вĕренет.

1970.

— Петĕр таврăнчĕ çартан,—
Тенине илтсен,
Лисук пăхрĕ кантăкран
Ашшĕ сисиччен.

Урампа иртет салтак...
Хумханать чĕре:
Пĕвĕ те утти йăлтах
Çывăх-çке хĕре.

Сар пикешĕн канăç çук.
Çĕнĕ крыльцаран
Вĕçсе анĕччĕ Лисук —
Аван мар çынран.

...Витĕнет шап-шур тумпа
Лăпкă Выл хĕрри.
Юр çинче — çĕн атăпа
Çĕн калуш йĕрри.

1968.

## ТЕХУЧИЛИЩЕ ХЁРЁ

Куç илмесĕр сăнап:
Курăнмасть-и шур кĕрĕк.
Эп кĕтетĕп сана,
Техучилище хĕрĕ.

Комсомол стройкинче
Канăçа эп çухатрăм.
Пин пике хушшинче
Пĕр сана çеç юратрăм.

Чўречў умĕпе
Ирĕн-каçăн иртетĕп,
Çырă куç хĕррипе
Пăхса илмĕн-ши, тетĕп.

Кăн-кăвак тўпене
Çĕкленет кĕмĕл çĕрĕ.
Ан çунтар чĕрене,
Техучилище хĕрĕ.

1971.

## ÇУЛА ТУХАС УМĔН

Инçе çула тухас умĕн этем кутамкка хатĕрлет. Кутамккасем тĕрлĕрен пулаççĕ. Студент кутамкки, салтак кутамкки... Сăвă кутамкки...

Юрий Семенов тахçанах çула тухнă-ха. Сăмах кунта тăван поэзин инçе çулне тухасси пирки.

Унăн сăввисем малтан районти хаçатра пичетленнĕ. Халĕ вĕсене эпир Чăваш çĕршывĕн тĕп хулинче — Шупашкарта тухакан хаçатсемпе журналсенче куратпăр.

Этем ывăлĕ çĕр çинче çирĕп утма тытăниччен пĕрремĕш утăм тăвать. Такăнать, ӳкет, çамкине кăвакартать. Ытти ача-пăча пекех, Юрий те çавăн евĕрлĕ ӳснĕ.

Чăн-чăн поэт пулсан, вăл ăçта çуралнине те, мĕншĕн çуралнине те пĕлмелле.

Юрий Семенов Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче 1941 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче çуралнă. Тăван çĕршыв вăрçи пуçланнă чухне вăл ултă уйăх тултарайман ача пулнă. Вăрçă пĕтиччен утма тытăннă. Ялти шкула çӳренĕ. Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине вĕренме кайнă. Унтан чипер вĕренсе тухнă. Комсомолăн Çĕрпӳ райкомĕнче, районти хаçатра ĕçленĕ. Салтакра пулнă. Малтан — ахаль салтак, кайрантарах — офицер. Халĕ Чăваш университетĕнче вĕренет, çав вăхăтрах кĕнеке издательствинче ĕçлет. Илемлĕ литература редакторĕ.

Çамрăк поэтăн кунçулĕ — паянхи пин-пин яш-кĕрĕм кунçулĕ. Юрий Семенов хăйĕн вулаканĕпе кăшкăрашса калаçмасть. Тӳлеккĕн те лăпкăн сă-махлать. Çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ поэт — вулаканăн сывăх юлташĕ. Пирĕн аслă шухăш — çĕр чăмăрĕ çинче сута коммунизм керменне ту-малли шухăш чăн тĕрĕссине поэт çепĕççĕн кала-сах ĕнентермелле. Унсăрăн мĕне кирлĕ сăвă, мĕне кирлĕ поэзи, мĕне кирлĕ сăвă кĕнеки!

Çамрăк поэт Юрий Семенов хăй мĕн çырнине ĕнентерме пĕлет. Унăн сăввисем çăмăл вуланаççĕ. Апла пулин те эпĕ, вулакан, сисетĕп: вăл çырас сăмаха нумайччен суйлать, хывăхне аяккалла си-рет, тепĕр чухне пин сăмахран пĕр сăмах суйласа илет.

Поэтăн пĕр сăввинче сакăр йĕрке кăна. Унта ротăри старшина çĕлĕк валеçет. Çакăнтан эпир хĕл пуçланнине пĕлетпĕр. Пысăк шухăш, ăшă ку-лăш. Хитре сăвă. Чăн-чăн поэзи çавăн пек пул-малла та. Шухăша хускатмалла, чĕрене ăшăтмалла.

Юрий Семенов тăван поэзи пахчине салтак кутамккипе килсе кĕчĕ. Çав кутамккара сăвă тет-рачĕсем нумай. Хулăн тетрадьсем! Халь акă вăл инçе çула тухать. Ун çурăмĕ çинче сăвă кутамкки. Çула тухас умĕн вăл самантлăха ларать те хăй ăссĕн пăшăлтатса илет: тупа тăватăп, тет.

Ан тив эппин, пултăр шанчăклă, çирĕп «Тупа»!

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

## ТУПМАЛЛИ

### КАЛАÇ, ЧĔРЕМ


Ирсем . . . . . . . . 3
Аслă юхăм . . . . . . 4
Хĕрлĕ площадьре . . . . . 6
Комсомолăн III съезчĕн делегачĕ . . 8
Хурăнлăх . . . . . . 10
Пианист . . . . . . . . —
Шырав . . . . . . . . 11
Телей . . . . . . . . 12
Хумсем . . . . . . . . 13
Т и х а . . . . . . . . 14
Тавăру . . . . . . . . —
Литейщик . . . . . . . 15
Кĕрхи шухăш . . . . . . 16
«Сарă тутăр çыхрĕ те хĕвел» . . . 17
Т ă р и . . . . . . . . 18
Çавал çинчи çумăр . . . . . —
«— Яш чухне çаплаччĕ...» . . . . 19
«Лăпкă тăман тухрĕ касхине» . . . 20
Будильник хорĕ . . . . . —
Чул çыран . . . . . . . 22
Крановщица . . . . . . . 23


### ÇĔРШЫВ САЛТАКĔСЕМ


Пуçламăшĕ . . . . . . 25
Тавтапуç . . . . . . . 26

Мускав урамĕнче . . . . . . —
Полк ялавĕ . . . . . . . 27
«Халь те асра...» . . . . . 28
Эльба хĕрринче . . . . . 29
Пирĕн рота . . . . . . . 30
Аннене . . . . . . . . 32
Хĕл пуçламăшĕ . . . . . 33
Мана халех ан кĕтĕр . . . . . 34
Ю р ă . . . . . . . . 35
Çăлтăрсем . . . . . . . 37
Тус пулар-и, Эрих Вернер! . . . 38
«Вăрнар ен вăрманĕ...» . . . . 39
Курма килсен . . . . . . 40
«Эс кур, юлташăм, тинкерсем» . . 41
Ç ă л . . . . . . . . 42
Сан çырмалла . . . . . 43
Пирĕн несĕл . . . . . . 44
Куççуль . . . . . . . 45
«Дневальнăй уçрĕ» . . . . . 47
«Привал!..» . . . . . . . 48
Хурăнсем . . . . . . . 49
Чикĕре . . . . . . . . 50
Пострич ир . . . . . . . —
Йывăççем . . . . . . . 51
Тревога . . . . . . . . 52
Старшина . . . . . . . 53
Мамай сăртлăхĕнче . . . . . 54

## АН ВАСКА, ПИКЕÇĔМ

Ан васка . . . . . . . 57
«Çĕмĕрт çеçкине эп татрăм...» . . . 58
«Те маттурччĕ, те айванччĕ» . . . —
«Уйрăлас килместчĕ ман та, сан та» . 59
Хурав . . . . . . . . 60
«Кăвак сăрлă кимĕ» . . . . . 61

«Алла-аллăн тытнă, ыткăнаççĕ...» . . —
«Тĕлсĕр харкашăвăн хытă хăмăлĕ» . . 62
Парне . . . . . . . . . 63
«Пĕрре вĕттĕн-вĕттĕн пусрăн» . . . 64
«Çумăр çурĕ—шăнтрĕ лартрĕ» . . . —
«Çурăлакан чечек пек чӳхенсе» . . 65
«Ăнсăртран, эс такама качча кайсан» . —
Юрпикеçĕм, Юрпикe . . . . . 66
«Çук, санпа ĕç çук ман урăх» . . . 67
Çăка . . . . . . . . 68
«И, мĕн çутă тĕнчере?» . . . . —
Çумăр . . . . . . . . 69
Çĕн çул кунĕ . . . . . . . 70
Хăнасем кайсан . . . . . . 72
Вĕрене . . . . . . . . . —
«— Петĕр таврăнчĕ çартан...» . . . 73
Техучилище хĕрĕ . . . . . . 74
Çула тухас умĕн . . . . . . 75

Семенов Юрий Семенович

ПРИСЯГА

Стихи

На чувашском языке

Редактор Г. А. Ефимов
Художник Н. Т. Кумбиров
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Р. Я. Семенова

НТ 09301. Сдано в набор 18/X-1971 г. Подписано к печати 27/VI-1972 г. Изд. № 80/72 г. Формат 60×84/32. Типографская № 3. Физ. печ. л. 2,50. Усл. печ. л. 2,32. Учетно-изд. л. 2,36. Заказ № 5588. Тираж 3000 экз. Цена 24 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР Чебоксары, Володарского, 5.

50

**Цена 24 коп.**